Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Карягина Марина Федоровна**

**Книга: Сас палли çĕршывĕнче**

# Рассказ: Авăтайман автан.

Альтук аппасен Автанĕ апат анманнипе аптăранă. Аран-аран авăтнă – ах, анчах! Алхас Анчăк Автана анратмаллипех анратнă. Айван! Айван анчах-и – апшур! Апата авăртать анчах. Альтук аппа анкартинче аппаланать, Автан авăтаймасăр асапланать, Анчăк Автана асăрхамасăр аш авăрать. Айкашать анчах Анчăк, Автанăн ав апат анмасть. Ах, артак-çке, ах, ачашлаççĕ-çке Анчăка. Ашапатман! Ашак!

*(Апчху! астумасăр апчухлатать Альтук аппа.)*

Ам-ам-ам!
Автан алки – авăнчăк,
Алкум алăкĕ амантнă.
Алăк айăплă-и, алки-и?
Ам! Автанах айăплă: Асăрханман, апăрша! –

ашкăнса амлатнă Анчăк.

Аванмарланнă Автан. Алки аманни – амантнăрин, авăтайманни - ай-тур-тур... Ах, алки авăнчăкчĕ, атти аванччĕ, аçамĕ аркă-аркăллăччĕ...

Автан асăрхаман, Айташ Акăш аннă-мĕн ампар айне, аллинче – азбука.

А к ă ш *(алхапăллăн)*. Автан, акă азбука. Асăнмалăх Айташ Акăшран. Азбукăра – алфавит.

А в т а н. Алфавит? Азбука? Акăш акамăм, апат анмасть-çке... Азбука апат-им аптăранăскершĕн? Авăтаймастăп.

А к ă ш. Асăрха-ха, Автанăм, азбукăра акă а-пель-син, а-лыча, а-рахис, а-нис, а-рпус...

А в т а н. Арахис? Арпус?

Астивесчĕ Автанăн! Аппетичĕ – арăсланăннилле! Аван! Акă алфавичĕ. Ансат-и? Ансат-иç! А! А! Автан анасласшăнччĕ ахăр, анасланмарĕ – авăтăнчĕ! Ак ача!

– А-а-а-а! – авăтрĕ Автан. Азбука-тăк азбука! Алфавит-тăк алфавит!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.